К 4С(Чув)
Т76

А. Т. ТРОФИМОВ

28708-Чув.




# БУКВАР

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ
ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР
1937

Национальная библиотека ЧР
4-028708

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

Моргаушская типография Заказ 860 Тираж 10.000 1983г.

8 14106-

Чув.
3-100а
4с(Чув)
К 776
ПРОВЕРЕНО
Инв. № 390
28708-чув
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

















# А









# Н









# АН

# А Н





# НА







НА 

НА 





# Ан—на

# Анна

## ан

## на

## А а

*а а а*

*на на ан ан*

# У



# НУ

# НУ—НУ

| | |
|---|---|
| ун | ау |
| ну | уа |







# ух, ух    Х

| | |
|---|---|
| ух | ха |
| ах | ух |

у х



х х х х х ах



# Р

**Х У Р**

**Х У Р**



| | |
|---|---|
| хур | ху-ран |
| ху-ра | ху-ра |
| ху-ран | у-ра |



*хур*



# М

**му** **хум**

у-рам ар-ман

урам арман

**Ан ман.**

**Ар-ма-на ан.**



*М*

*у и м арман*

# К



КУ-КУ

КУР-КА
КУ-РАК

КУР
КУН

Ак курак.
Ку хура курак.
Хура курак.
Курак кур.









# Т

**ТА-КА** **ТУ-РАТ**

**ТАКА** **ТУРАТ**

| | | |
|---|---|---|
| ту-та | ту-рат | хут |
| ту-ра | турт | хурт |

Ху-ра та-ка.
Та-ка кар-та-ра.

| | |
|---|---|
| ту-та | та-ка |
| ту-на | та-кан |
| тур-та | кар-та |

*т*

*т така*



# П

пу-кан
пукан

хуп

хап-ха
хапха



Хап-ха па-ха.

Хап-ха хуп.

| | | |
|---|---|---|
| пу-ху | а-пат | пур |
| пу-ра | ка-пан | пар |
| ур-па | па-так | |

*п*

*П п пукан*



# С

су-хан
сухан

кас
сас

Ак сухан.
Сухан кас.
Тарас, на сухан.
Сахар, сухан пух.
Мана сухан пар.

| | | |
|---|---|---|
| су-ха | ка-су | ка-рас |
| су-хан | пу-су | ка-сас |

*с с сухан*



Республиканская
им. М. ГОРЬКОГО
Чувашской АССР
28708 чув



# Ы

сыс-на

ых-ра хыр

Сахар, ура сыр.

Армана пыр.

Ыран ыхра пух.

| | | |
|---|---|---|
| ых-ра | хыр | тыт |
| ы-ран | пыр | тат |





ы-раш ша-па

ыраш шапа

# Ш

Ку ыраш.



Таса ыраш.

Таса ыраш акар.

| | |
|---|---|
| ку-шак | каш-та |
| кур-шак | шат-ра |
| шуп-ка | па-ша-лу |

*ш*

*ш ш шш ыраш*




Л

шкул пыл ул-ма

ла-ша кал-та

Шкул таса.

Анна шкулта.

Тарас тулта.

Анна, мала лар.

Раман, вула.

*л Л*

*Шкул таса.*



Лаша акара.
Ула лаша акара.
Хура лаша та акара.
Лашана апат пар.

| | | |
|---|---|---|
| ул-ма | пыл | шал-та |
| сал-ма | кул | тул-та |
| са-лам | ху-ла | лут-ра |

*Л*

*Лаша ухара.*



# Арман.

Арман ларман.
Армана ыраш антар.
Ыраш сахал мар.
Ыраша алама ан ман.
Аласан ыраш таса.

ар — ман
лар — ман

*М*

*Арман ларман.*



# Ăă

пу-лă

пулă

ă-са

а-тă

атă

Тарас пулă тытнă.
Пулă пысăк пулнă.
Аран туртса кăларнă.

| | | |
|---|---|---|
| у-тă | хă-на | су-рăх |
| ты-рă | шă-на | ту-рăх |
| ты-лă | хă-ма | ку-рăк |

*Ă ă*

*Тарас пулă тытнă.*

Сашук пăшал тунă.

Ак пăшал.



## Раман.



Раман урама тухнă.

Урана атă тăхăннă.

Раман шăнман.

Анна, сăхман тăхăн.

Тăла сăхман ăшă.

су — лă
су — рăх
су — хал

Р

Раман шăнман.



# В

шыв
вăр-ман
лав

## Вăрман.

Вăрман аслă. Вăрманта хурăн, ăвăс сахал мар. Унта хурама та пур.

| | |
|---|---|
| са-вăл | вак |
| са-вăт | кă-вак |
| са-вăк | кă-вар |

*В в*

*Вăрман аслă.*

# Павӑл.

Павӑл сывмар вyртнӑ. Павӑла пӑхма тухтӑр пынӑ. Тухтӑр ӑна тула тухма хушман. Павӑл тула тухман. Павӑл сывалнӑ.

---



Аллуна, уруна таса тыт.

Шӑлна та таса тыт.

*Шӑлла таса тыт.*



# И

И-ван
Иван

шă-ши

Кушак шăп выртнă.
Шăши ăна курса савăнса ларнă.
Кушак тăнă та ăна тытнă.

| | |
|---|---|
| хир | ир |
| вир | иш |
| пир | кил |

*И и*

*Иван шăши курнă.*



# Кушакпа шăши.

Марук кушак.
Иван шăши.
Кушакăн шăши тытмала.
Шăшин кушакран тармала.
Марук Ивана кап! тытнă.

*Кушак шăши тытнă.*

# Е е







се-хет
сехет

пу-ка-не

ат-те
ан-не

Лисукăн пукане пулнă.
Пукане хитре пулнă.
Лисук ăна аван пăхнă.
Таса тумтир туса панă.

| | | |
|---|---|---|
| ви-те | ер-не | се-хет |
| вит-ре | ер-тел | е-мел |
| сер-те | пар-не | е-тем |

*Ее*

*Атте. Анне.*

# Ç





çăл-тăр кус çур-ла
çăлтăр çурла

(in the middle between the two columns: кус — printed as "куç")

## Çурлапа мăлатук.

Хутран çурлапа мăлатук турăмăр. Тата çăлтăр касса кăлартăмăр.

Класа çапса хутăмăр.

| | |
|---|---|
| ça-ва | çу-на |
| ça-ран | çă-нăх |
| ça-рăк | çă-мах |

*Çç*

*Çурла. Мăлатук.*



# Иван.

Канмали кун пулнă. Иван пăшалпа вăрмана уттарнă. Унпа Хураçка пынă.

Иван ăсан курнă. Хураçка малта пынă. Ăсан унран хăраса тарнă. Иван киле пушах таварăннă.

*Иван ăсан курнă.*



# Ĕ ĕ

ĕ-не
сĕ-лĕ
пĕ-кĕ

## Ĕне.

Пирĕн хĕрлĕ ĕне пур. Вăл питĕ сĕтлĕ. Епĕр сĕт ĕҫетпĕр.

Сĕтрен турăх та тăватпăр.

| | | |
|---|---|---|
| ти-лĕ | ҫĕ-лĕк | ҫĕ-ҫĕ |
| ки-лĕ | сĕ-тел | тĕ-рĕ |
| сĕ-лĕ | кĕ-лет | кĕ-рĕ |

*Ĕ ĕ*

*Хĕрлĕ ĕне.*



# Ч

## чăх-сем чă-рăш

| | | |
|---|---|---|
| чă-рăш | ча-как | чĕ-лĕ |
| чă-лан | ча-на | чĕл-хе |
| чус-та | чĕ-кеç | чĕ-ре |
| ха-чă | ка-ча-ка | чĕр-не |

### Ч ĕ к е ç



Чĕкеç, чĕкеç,
чĕкеçĕм,
ларса канма
пĕлмерĕн,
кунĕле апат
пуçтартăн,
ачусене çитертĕн.

Ч ч

Чăх çăмарти.

# Автан.



Автан хура уралă, хĕрлĕ çĕлĕклĕ, куçĕсем миксе тухас пек, сăмси кукăр. Пĕрре епĕ ун патĕнчен иртсе пыратăп. Вăл çуначĕсемпе çапрĕ те, çăварне карса: ки-ки-рик! терĕ.

## Автан тус.

Автан тус, автан тус!
Хĕрлĕ çĕлĕк, çулă пуç.
Мĕншĕн ытла ир тăратăн?
Мĕншĕн хытă кăшкăратăн?
Мана ирех вăрататăн.




# Шкул пахчи.

Пирĕн шкул пахчинче купăста, çĕрулми, кишĕр шултăра пулчĕ.

Сивĕте пуçласан, епĕр вĕсене васкаса кăлартăмăр.

Хĕлле çиме пуçтарса хутăмăр.

| | | |
|---|---|---|
| кал-ча | чĕ-рĕп | ку-пăс |
| пах-ча | çул-çă | ку-пăс-та |
| ça-рăк | ки-шĕр | кăш-ман |

*Купăста. Кишĕр.*



# Й

йы-тă уй

йытă пай

| | | |
|---|---|---|
| ка-йăк | йул-таш | вă-йă |
| хă-йăр | йу-ман | йу-рă |
| хă-йар | йă-мăк | йу-мах |

## Йакурпа кăсăйа.

Йакур кăсăйа тытнă. Вăл ăна класа илсе пычĕ. Ачасем пурте пыра-пыра пăхрĕç.

Кăсăйана епĕр читлĕхе хупрăмăр. Епĕр ăна апат паратпăр. Çуркунне çитсен кăсăйана ирĕке кăларса йаратпăр.

*Йй*

*Кăсăйа илемлĕ кайăк.*



# О

урок | перо
урок | перо

у-рок — пе-ро
урок — перо

Урок пуçланчĕ. Ачасем класра лараççĕ.

Пĕрремĕш урокра вĕсем шутларĕç. Иккĕмĕш урокра вуларĕç. Унтан çырма тытăнчĕç. Учитĕл ачасене çĕнĕ перо пачĕ.

Йулашки урокра ачасем йурларĕç. Унтан киле саланчĕç.

| | |
|---|---|
| пи-о-нер | кро-лик |
| ком-со-мол | у-рок |

*Оо*

*Урок. Перо.*

З



зво-нок за-йом

## Колхозăн.

Пирĕн колхозăн икĕ сат. Пĕри улмуççи сачĕ, тепри—çырла сачĕ.

Колхозăн тырă тулăх.
Унăн машинăсем нумай.

Колхозăн лашисем те паха. Унта тата ăратлă сыснасем, ĕнесем пур.

*З*

*Колхозăн лашисем паха.*



# Т̆

т̆ы-ха у-тат̆

т̆ыха чу-пат̆

## Т̆ыхасем.

Колхозăн т̆ыхасем пур.

Т̆ыхасене Хвет̆ук пăхат̆. Вăл т̆ыхасене апат парат̆, шăварат̆, хырчăкласа тасатат̆.

Т̆ыхасем Хвет̆ука палласçĕ. Ăна курсанах кĕçенеççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| На-т̆ук | ву-лат̆ | пă-хат̆ |
| Та-т̆ук | çы-рат̆ | ку-рат̆ |

*т̆*

*Хвет̆ук т̆ыхасе-не аван пăхат̆.*



# Ҥ

су-пăҥ

мă-кăҥ

мăкăҥ

**Супăҥ.**

Ваҥука амăшĕ супăҥ илсе панă. Вăл питне те, мăйне те супăҥпе çунă. Унăн пичĕ те, мăйĕ те, аллисем те тап-таса пулнă.

Мăкăҥ.



**Мăкăҥ çеçки çурăлсан,**
**килет пахча илемĕ.**
**Мăкăҥ çеçки тăкăнсан,**
**кайат̆ пахча илемĕ.**

| | |
|---|---|
| А-ҥук | коҥ-ки |
| Ва-ҥук | су-пăҥ |
| Са-ҥук | мă-кăҥ |

*Ҥ ҥ*

*Ваҥук. Саҥук.*

# Љ



Ко-љă

По-љă

Ља-ва

Аљ-т̆ук

## К о љ ă.

Кољă ир те, каç та çăванат̆. Уйрăм алшăллипе шăланат̆.

Кољă уйрăм чашăкран апат çийет. Апат çинĕ хыççăн вăл йаланах çăварне чўхет.

| | | |
|---|---|---|
| И-љуш | вы-љăх | хаљ |
| Аљ-т̆ук | мă-кăњ | а-хаљ |

*Љ љ*

*Кољă. Љава.*



## Кĕркунне.

Ăшă çу иртрĕ. Сивĕ кĕр çитрĕ. Кăвак пĕлĕт хупланчĕ. Хĕвел тарса пытанчĕ. Çеçен хир çаралчĕ.

Йĕри-тавра пылчăк. Кайăксем кăнтăр йенне вĕçсе кайрĕç.

---

**Хир илемĕ кайат̆.**
**Сĕм вăрман çаралат̆.**
**Пĕрмай çăмăр çăват̆...**
**Вăл хăçан пулат̆?**

*Ăшă çу иртрĕ.*



## Хӗл ҫывхарат̆.

Ҫанталӑк сивӗтрӗ. Ҫӗр вӑрӑмланчӗ. Сайра хутра йур ҫукалат̆. Ҫийе ӑшӑ тумтир, пуҫа ҫӗлӗк тӑхӑнма лекет.

Ҫырмари пӗвесем пӑрланса ларчӗҫ.

Йур ҫӑват, ҫӗр шуралат̆.

Хӗл ҫывхарат̆.

---

**Хирсенче йур анчах.**
**Ҫырмара пӑр анчах.**
**Сивӗтет аванах.**
**Вӑл хӑҫан пулат̆?**

*Хӗл ҫывхарат̆.*

## Наçтук.

Наçтук шкултан вĕренсе киле таврăннă. Килĕнче аслашшĕ анчах пулнă. Наçтук сĕтел хушшине ларнă. Вăл аслашшĕне кĕнеке вуласа панă. Унтан сăвă каланă. Аслашшĕ савăнса итлесе ларнă.



## Ĕç ерни.

Ернере çичĕ кун. Ултă кун шкулта вĕренетпĕр. Пĕр кун килте канатпăр.

## Кун йачĕсем.

Тунтикун. Ытларикун. Йункун. Кĕçнерникун. Ернекун. Шăматкун. Вырсарникун.

*Ернере çичĕ кун.*



кĕ-тӳ ӳп-ре **Ӳ**
кĕтӳ сӳ-ре

## Улай.

Улай, есĕ ăçта çӳрерĕн, кала-ха? Ывăнтăн пулĕ?

Епĕ хирте кĕтӳ хыççăн çӳрерĕм. Ĕнесемпе сурăхсене сыхларăм.

Хаљ киле чупса килтĕм. Сана курнипе хĕпĕртесе тăрататăп.

*Ӳ ӳ*

*Уăхра кĕтӳ çӳрет.*

# Пӳрт.

Иванпа Петӗр хӑма татӑкӗсенчен пӳрт тунӑ. Пӳрчӗн алӑкӗ те, чӳречи те пулнӑ.

Шала вӗсем сӗтел туса лартнӑ. Вӗсем ӑна йулташӗсене кӑтартнӑ. Пурте савӑннӑ.



| | | |
|---|---|---|
| хӳ-ре | тӳ-рӗ | сӳс |
| сӳ-ре | нӳ-рӗ | ҫӳҫ |
| ҫӳ-ҫе | тӳ-пе | сӳт |

# Сентти.

Чипер ача Сентти пур,

чупса ҫӳрет урамра.

Кӗвентине утланса

ача выљљаť лашала.



## Тăвайкки йарăнни.

Ех, тăвайкки, тăвайкки,
мĕн чул ача йарăнаҭ!
Çуна, йĕлтĕр, йе коҧки
тăвайккине йакатаҭ.

Алăсем щăнса кўтни
ачасене ним те мар.
Кулса кăна йарăнар,
çав вăл хĕлле савăнни.

---

Аҭа, Ваҧук, урама,
унта сана кĕтеççĕ.
Миша, Анна, Хĕвекла
выљамашкăн чĕнеççĕ.

# Б б



ра-бочи

## Рабочисем.

Акă савăт. Унта рабочисем ĕçлеççĕ. Унта мĕн чухлĕ рабочи! Арçынсем, хĕрарăмсем, пурте пĕрле ĕçлеççĕ.

Колхозра колхозниксем ĕçлеççĕ.

Рабочисемпе колхозниксем çирĕп çыхăну тытаççĕ.

Ес рабочи, еп колхозник.
Епĕр иккĕн пĕр тăван.

б

Саватра раб-
очисем ĕçлеççĕ.



**Фермă.** Фф

Пирĕн колхозăн фермă пур. Унта ăратлă сыснасем пит нумай.
Фермăри сыснасем самăр.
Çăрисем шап-шурă.
Фермăн хапхи çине:
**Фермă** тесе çырнă.

*Ф ф*

*Колхозăн фер-мă пур.*



ав-то-бус

автобус

**Автобус.**

Акӑ пырат̆ автобус
аслӑ ҫулпа кӗрлесе.
Ҫил пек вӗҫет малала,
кайӑк вӗҫсе ҫитес ҫук.

**Автомобил.**

Автобуспа автомобил лашасӑрах чупаҫҫӗ. Автомобил ҫине те, автобус ҫине те ҫынсем ларса ҫӳреҫҫӗ.

автомобил.

шофӗр



*Автомобил.*

# Г



Гру-зо-вик

кило-грам
килограм

Тавар турттармали автомобиле грузовик теҫҫӗ.

Грузовик ҫине тавар нумай тийеме пулаҭ. Грузовик тата автобус ҫӗр ҫинче чупаҫҫӗ.

Аероплан сывлӑшра вӗҫет. Вӑл автомобилрен те хытӑ каяҭ.



а-е-ро-план
аероплан

*Гг*

*Грузовикпе тавар турт-*
*тарассӗ.*



# Д

ра-ди-о   удар-ник
радио   ударник

Колхозра радио, шкулта та радио. Пирĕн килте те радио пур.

---

Йурăсем йурласа кăтартат̆,
çĕнĕ хыпарсем пĕлтерет.
Мĕн вăл?

| | |
|---|---|
| ра-дио | бри-га-дă |
| у-да-рник | бри-га-дир |

*д*

*Радио.*



## Пирĕн ăмăрту.

Епĕр иккĕмĕш класра вĕренекен ачасемпе ăмăрту турăмăр.

Шкула кун сиктермесĕр çӳретпĕр. Кĕнекесене, ĕç хатĕрĕсене тирпейлĕ тытатпăр.

## Ударник пулар.

Савăтра ударник.
Колхозра ударник.
Шкулта та ударник.
Пурте ударник пулар.

Чи лайăх вĕренекен ачасене отличник теççĕ.

Пурте отличник пулма тăрăшар.

# Ж



де-жур-нăй

жур-нал

Класра пирĕн дежурнăй пур. Вăл класри йĕркене асăрхаť.

Епĕр ăна итлетпĕр. Вăл хушнине тăватпăр.

Черетпе епĕр пурте дежурнăй пулатпăр. Клас тускине тасататпăр.

Урок пĕтсен йаланах фортăчкă уçса хуратпăр.

*Жж*

*Пайан Павăл дежурнăй.*



ци-фăр
цифăр

# Ц

**Окт̆абӗр революцийӗ.**

Епӗр шкулта Окт̆абӗр революцине уйавласа ирттертӗмӗр. Хӗрлӗ йалав турăмăр. Пионерсемпе пӗрле пуху туса ирттертӗмӗр. Йурăсем йурларăмăр. Сăвăсем каларăмăр.

**Окт̆абӗр революцийӗ**
**сывă пултăр!**

*Ц ц Цифăр.*



**Владимир Илйич Ленин.**

Вăл пĕтĕм ĕçхалăхĕн
çулпуçĕ,
аслă вĕрентекенĕ,
çывăх тусĕ пулнă.
Епĕр Ленин вĕрентнĕ пек пурăнатпăр.
Ленин кăтартса хăварнине
тăватпăр.

*Ленин.*



**Иосиф Виссарионович Сталин.**

Сталин пĕтĕм ĕçхалăхне Ленин кăтартса хăварнă çулпа йертсе пырать.

Сталин—коммуниссен партин çулпуçĕ.

Сталин—пĕтĕм ĕçхалăхĕн çулпуçĕ.

Сыва пултăр Сталин йулташ!

*Сталин.*

## Мамлакат.

Мамлакат—хĕрача. Вăл пурăнакан çĕршывра уйсенче çĕрмамăкĕ акса ўстереççĕ.

Çĕрмамăк пухнă чухне Мамлакат пуринчен те авантарах ĕçленĕ. Çĕрмамăкне вăл хăрах алăпа мар, икĕ алăпа харăс пуçтарнă.



Çапла вăл пуринчен те ытларах çĕрмамăк пухнă. Çавăншăн ăна пирĕн патшалăхри чи чаплă ордĕн—Ленин ордĕнĕ панă. Тата Сталин йулташ ăна сехет парса парнеленĕ.

Мамлакат шкулта вĕренет. Вăл отличницă.

# Пионер йурри

Танкăр-танкăр танкăртатрĕ
параппан сасси.
Йан-йанах йанрарĕ
пионер сасси.





В. М. Молăтăв. М. И. Калинин.

## Хĕрӳлĕ ĕç.

Çĕршыв хĕрсе ĕçлет,
ĕçре çĕршыв вĕрет.
Мăн саватсем тăватпăр.
Мăн çурт-йĕрсем лартатпăр.
Ĕçхалăхĕ ĕçре,
пур çамрăк вĕренӳре.

## Савăнăçлă пурăнăç.

Хĕпĕртесе савăнса пурăнатпăр епĕр, Совет çĕршывĕнчи ачасем.

Кам пирĕн пурăнăçа савăнăçлă турĕ?

Пирĕн çĕршыва кам телейлĕ турĕ?

Большевиксен партийĕ—Ленинпа Сталин партийĕ.



Хӗрлӗ çарӑн пуçлӑхӗ
К. Й. Ворошилӑв йулташ

## Хӗрлӗ Çар—пирӗн вӑй.

Пире вӑрçӑ кирлӗ мар.
Ӗçхалӑхшӗн вӑрçӑ—шар.
Анчах çӑтлӑх тӑшмансем
пирӗн çине килесрен
хатӗр тӑрат̆ Хӗрлӗ Çар—
пире сыхлат̆ йаланах.






## Окт̆абӗр ачисем.

Ех, хастарлăнçке утатпăр
епӗр, окт̆абӗр ачисем.
Пит патмарăн хаl̆ ўсетпӗр
çӗнӗ пурăнăç калчисем.
Килӗр, килӗр, пурте килӗр
окт̆абрйатсен ӗретне!
Пурте хӗрлӗ çăлтăр илӗр,
Пурте килӗр вӗренме.

---

Манăн атте коммунис,
анне коммунискă.
Манăн пичче пионер,
аппа комсомолкă.
Епӗ окт̆абрйонăк.



Аа Бб Вв Гг Дд

*Аа Бб Вв Гг Дд*

Ӑӑ Ее Ӗӗ Жж Зз

*Ӑӑ Ее Ӗӗ Жж Зз*

Ии Йй Кк Лл Ђђ

*Ии Йй Кк Лл Ђђ*

Мм Нн Ӈӈ Оо Пп

*Мм Нн Ӈӈ Оо Пп*

Рр Сс Ҫҫ Тт Т̌т̌

*Рр Сс Ҫҫ Тт Т̌т̌*

Уу Ӳӳ Фф Хх Цц

*Уу Ӳӳ Фф Хх Цц*

Чч Шш Ыы

*Чч Шш Ыы*



## Чӗрӗп.

Ачасем курӑк ӑшӗнче чӗрӗп тупнӑ. Вӗсем ӑна киле илсе кайасшӑн пулнӑ. Анчах ӑна нийепле йӑтма май пулман. Чӗрӗпӗн йӗпписем чикнӗ. Вара Ваçук ӑна çӗлӗк ӑшне хунӑ та киле илсе кайнӑ.

Ачасем чӗрӗпе шкула илсе пырса чӗрчун кӗтессине йанӑ.

*Чӗрӗп йӗпле.*

# Хурăн.



**Хурăн çулçи сарăлсан,**
**килет вăрман илемĕ.**
**Хурăн çулçи тăкăнсан,**
**кайаŧ вăрман илемĕ.**



## Кĕрхи вăрман.

Кĕркунне Миша ашшĕпе вăрмана кайнă. Вăрманта йăвăç çулçисем те, курăксем те сарăхнă. Çырла, кăмпа, мăйăр, йĕкел—нимĕн те йулман. Кайăксен йурри те илтĕнмен. Вĕсем ăшă йенне, хĕл пулман çĕре, вĕççе кайнă.



## Нăрă.

Епĕр ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Унта йăвăç çулçисем, курăксем пухрăмăр. Лĕпĕшсем тытрăмăр. Пĕр шăрчăк тата нăрă тытрăмăр.

Нăрăпа шăрчăка пĕр спичкă коробки ăшне хутăмăр. Киле çитсен пăхрăмăр та, унта пĕр нăрă анчах йулнă. Шăрчăкăн пуçĕ тата çунатти йулашкисем çех йулнă.

Шăрчăка нăрă çисе йанă.

## Кушак.

Кушак пÿрт тăррине улăхрĕ. Вăл урисене хутлатса выртрĕ те çывăрса кайрĕ. Çерçи вĕçсе пычĕ те ун патне ларчĕ.

— Ан лар унта çерçи! Темĕн курăн. Кушаксем пит чейе вĕсем.





## Шапасем.

Ачасем пӗве хӗрринче выљана Вӗсем шапасем ларнине курнӑ. Ачасем вӗтӗ чулсем пуçтарнӑ та шапасене чулпа пере пуçланӑ.

Пӗр шапи кӑшт пуçне кӑларчӗ тет те ачасене каларӗ тет:

— Чарӑнӑр, ачасем, ан перӗр! Сире вӑйӑ та, пире вилӗм,—терӗ тет.

## Хурсем.

Хурсем шыв хӗррине аннӑ. Вӗсем шыва кӗрсе кайрӗç. Шыв вӗсем патӗнчен ункӑн-ункӑн хумханса айак-

кала кайаҫ. Кăшт тăрсан, шыв каллех йап-йака пулса тăраҫ.

Шывĕ тăп-тăрă. Хурсен урисем курăнса пыраççĕ.



## Кăвакал.

— Нарт-нарт кăвакал,
ăçта кайан кăвакал?
— Арман айне кайатăп.
— Унта санăн мĕскер пур?
— Унта манăн йăва пур.
— Сан йăвара мĕскер пур?
— Унта манăн чĕпсем пур.

## Кушакпа шăшисем.

Пĕр карчăкăн нӳхрепре çу пулнă. Шăшисем вăл çава çиме пуçланă. Шăшисене тытма карчăк нӳхрепе кушак йанă.

Кушак шăшисене те тытнă, çуне те çисе йанă.

## Чĕкеçсем.



Пӳрт карнисĕ айĕнче чĕкеç йăви пулнă. Чĕкеçĕн сарă сăмсалă чĕп-писем йăвара пу-çĕсене илемлĕн кă-тартса ларнă.

Пĕрре пĕр чĕппи йăваран тухнă ӳкнĕ. Чĕкеçсем ун тавра хурлăхлăн çуйăхса вĕçсе çӳренĕ.

Вăл вăхăтра Пеťă урампа иртсе пынă. Пеťă чĕкеç чĕппине илнĕ те йăвине хунă.

Чĕкеçсем савăнăçлăн чĕвĕлтетме пуçланă.

## Мулкач çурисем.

Çула пулнă. Çимун пичче колхоз хурĕсене пăхса çÿренĕ.

Сасартăк вăл курăк ăшĕнче тем мĕшĕлтетнине курах кайаť. Çывăхарах пырса пăхаť те—мулкач çури лараť. Çимун пичче ăна хăйĕн сăхманĕпе лап! витсе хураť.

Вара вăл мулкач çурине тытаť те киле илсе килет.



## Тилĕпе шăшисем.

Шăшисем пĕве хĕрринче пурăннă. Çуркунне пулсан çырмана шыв тулнă. Шăшисем сăрт çинеле куçса кайнă. Унта тилĕ пурăннă. Тилĕ шăшисем çисе самăрăлса кайнă.

## Кушак аçипе çерçи.

Çерçи йăвăç çинче ларнă. Йăвăç айĕнче кушак ларнă. Кушак çерçийе калаť: „Вĕçсе ан-ха ман пата, пĕрле выљăпăр“,— тет.



Çерçи калаť: „Кушак, есĕ малтан хăвăн туту çумне тĕк ăçтан сыпăçнине кала-ха!“—тет.



Кушак ăна калаť: „Епĕ халĕ тин ирхи апат çирĕм“,—тет.

Çерçи калаť: „Мана кăнтăрлахи апат çийесшĕн-и мĕн есĕ? Çук, епĕ ватă çерçи, сирĕн пеккисене аван пĕлетĕп епĕ. Мана улталаймăн“,— тет.

## Йĕр тăрăх.

Пеťук хăйĕн аслашшĕпе пĕрле вăрмана кайнă. Тин çеç йур çунă.

— Пеťук, кунта кайăксем нумай çÿреççĕ мĕн,—тет аслашшĕ.

Пет̆ук пăхат̆—нимĕнле кайăк çўренине те курмаст̆.

— Асатте, кайăксем çукçке.

— Епĕ йĕр тăрăх куратăп,—тет аслашшĕ.—Акă мулкач—кĕске хўре сиксе кайнă. Акă тилĕ йĕрĕ. Акă кашкăр çул урлă каçса кайнă.



## Йур кĕлетке.

Хĕл çитнĕ. Йур çуса лартнă. Ачасем йуртан çын кĕлетки тунă. Кăмрăкран куçĕсене тунă. Кĕлеткен аллисем те пулнă.

Кĕлеткен аллине шăпăр тыттарнă.

*Хĕл çитнĕ.*

## Йолкă.

Уйрăмăнах тӳрĕ ӳссе ларнă вăрман варринче пĕчĕк чăрăш. Çамрăклах вăл сивве тӳснĕ. Çил-тăвăл та пайтах курнă.

Хĕлле чăрăша касса кайнă. Ăна шкула илсе пынă. Тĕрлĕ тĕслĕ хутсемпе илемлетсе йолкă тунă.

Йолкă тавра ачасем çаврăнаççĕ, йурлаççĕ, алă çупса ташлаççĕ.



## Колђă аероплан курни.

Çуркунне пулнă. Йур ирĕлнĕ. Урамра шыв йухнă. Колђă шыв тăрăх кимĕ йухтарнă.

Сасартăк çӳлте темĕскер кĕрленĕ сас илтĕннĕ. Колђă пуçне çĕклесе çӳлеле пăхнă та ун тĕлнеле пĕр пысăк кайăк пекскер вĕçсе пынине курах кайнă. Вăл аероплан пулнă. Колђă аероплан çине тĕлĕнсе пăхса тăнă. Çав вăхăтра унăн кимми йухнă кайнă.



Колђă аероплан курнă.



## Пуйăс.

Реҍсăсем йăнăшаççĕ,
реҍсăсем чăнкăртатаççĕ.
Пуйăс, пуйăс вĕçтерет,
пуйăс хытă чĕтретет.

Ак пыратпăр, пит васкатпăр,
станцине çитсе тăратпăр.
Анăр, камăн анмала,
пирĕн инçе каймала.

## Упапа старик.

Упа старикпе туслашнă. Вĕсем иккĕшĕ пĕрле çарăк акма шут тытнă. Старик упана калат: „Мана тымарри, сана тăрри пултăр,“—тет. „Йурĕ“,—тет упа.

Акă çарăкĕ пулса çитрĕ. Старик çарăкне илчĕ. Упана çеçки лекрĕ. Ӳпкелешрĕ упа, анчах ним тума та çук.

Тепĕр çулĕнче старик упана калаť. „Аťа каллех иккĕн пĕрле акăпăр",—тет. „Йураť,—тет упа.—Анчах есĕ хаљ тăррине ил, мана тымарне пар",—тет.

„Йурĕ. Есĕ каланă пек пултăр",—тет старик.

Акрĕç вĕсем тулă. Тулли питĕ аван пулчĕ. Старик тăррине илчĕ, упана хăмăлĕ лекрĕ.

Çавăнтан вара упапа старикĕн туслашу пĕтрĕ, тет.

## Букварь вĕçĕ.

Халĕ епĕр, ачасем,
хут вулама пĕлетпĕр.
Кирек мĕнле сăмаха
такăнмасăр вулатпăр.

Çырасса та пит йака,
пĕр йĕркепе çыратпăр.

Редактор Чувашгиза А. Григорьева. Техредактор В. Порфирьев.

Послано в производство 14/VIII-1937 г. Подписано к печати 4/IX-1937 г.
Уп. Чувашлита № 1905 Чувашгиз № 230 Ст. ф. б. 60×92 1/16. Об'ем 4,75 п. л.
В п. л. 24000 п. з. У—1. Заказ № 1827. Тираж 40000 экз.
Г. Чебоксары, типография № 1 Чувашгиза, дом печати.

[illegible]



Хакĕ 63 пус
Цена 63 коп.
0-06
Шн482
Н Чув.
3-100а

А. Т. Трофимов

# БУКВАРЬ

Пятое издание

Утверждено НКП ЧАССР

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1937